26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус

1943
НОЯБРЬ
30
ЫТЛАРИКУН
236(6473) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВКП(б) Обкомĕнче

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ тырă сутăн илес ĕç Шупашкар тата Ишлей районĕсенче мĕнле пынине сÿтсе-явнă.

Бюро ларăвĕнче çакна палăртнă: государство валли тырă сутăн илес ĕç çав районсенче питĕ япăх пырать. Ишлей районĕнче государство валли тырă сутăн илмелли плана ноябрĕн 26-мĕшĕ тĕлне 41,5 процент çеç тултарнă, хатĕрлев пунктĕсене вара заданин 7 процентĕ чухлĕ çеç леçнĕ. Шупашкар районĕнче тырă сутăн илмелли планăн 56,5 процентне çеç пурнăçланă, çав планăн 6,4 процентĕ чухлĕ çеç хатĕрлев пунктĕсене леçнĕ. ВКП(б) Ишлей райкомĕпе Шупашкар райкомĕн секретарĕсем Сидоровпа Караушев юлташсем тырă сутăн илмелли плана пурнăçлас тĕлĕшпе ответлăха туймасăр ĕçленĕ, çак ĕç вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчен тата хуçалăх тĕлĕшĕнчен мĕн тери паха пулса тăнине ăнланса илмен, çав ĕçе пурнăça кĕртмешкĕн партипе совет активне, коммунистсемпе комсомолецсене мобилизациленмен.

ВКП(б) Ишлей райкомĕпе Шупашкар райкомĕ тата çав районсен исполкомсем тырра сутăн илмелли плана колхозсем патне çитерес ĕçе тĕрĕс туман, вĕсем государствăна тырă нумай сутма пултаракан колхозсене пĕчĕк задансем панă.

Çав районсенче тырă сутăн илес ĕçе уйрăм работниксем тÿрремĕнех саботаж туни те пулнă (Шупашкар райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Васильев, «Броневик» колхозăн председателĕ Петров, «Строитель» колхозăн председателĕ Андреев тата ыттисем те). ВКП(б) райкомĕсем çав фактсене лайăх пĕлнĕ, анчах та саботажниксене хирĕç татăклă мерăсем йышăнман, тырă хатĕрлес ĕçе саботаж тăвакансем, çак ĕçре государствăна улталакансем, тырă хатĕрлемелли плана пурнăçлассине пĕтерсе лартакансем Отечественнăй вăрçă условийĕсенче Тăван çĕршывăн чи усал тăшманĕсем пулса тăнине, çав тăшмансем тĕлĕшпе питĕ хаяр мерăсем йышăнмаллине вĕсем манса кайнă.

Заготзернон Чăваш республикинчи конторин управляющийĕ Минаев юлташ кăçал тырă хатĕрленĕ чухне тунă йăнăшсене халь шута илмен. ВКП(б) Обкомĕ темиçе хут та асăрхаттарнă пулин те, вăл колхозниксем илсе килекен тырра пĕр чăрăнмасăр йышăнса тăрас ĕçе организацилемен, çавăн пирки колхозниксем хатĕрлев пунктĕсенче темиçешер талăк иртте-реççĕ.

Чăвашпотребсоюз председателĕ Терентьев юлташ тырă сутăн илес тĕлĕшпе райпотребсоюзсемпе ялпосен ĕçне начар организациленĕ, хатĕрлев пунктĕсенче тырă паракансем валли чайнăйсемпе закусочнăйсем уçас тĕлĕшпе вара нимĕн те туман.

Тырă сутăн илес ĕçе начар организациленĕшĕн, тата çав ĕçре питĕ пысăк йăнăшсем тунăшăн ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ ВКП(б) Ишлей райкомĕн секретарьне Сидоров юлташа строгий выговор панă, çав выговора учет карточки çине çырса хумалла тунă. Сидоров юлташа тата çакăн пирки асăрхаттарса хăварнă: декабрĕн 3-мĕшĕччен районра ĕçе тÿрлетсе, вăйлатса ямасассăн, ăна вырăнтан та, партирен те кăлараççĕ тата суда параççĕ.

ВКП(б) Шупашкар райкомĕн секретарьне Караушев юлташа выговор панă, çав выговора учет карточки çине çырса хумалла тунă. ВКП(б) райкомне тырă сутăн илмелли плана декабрĕн 3-мĕшĕ тĕлне пурнăçлама тата сутăн илнĕ тырра декабрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр хатĕрлев пунктĕсене леçсе пĕтерме хушнă.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕн членне Белолипецкий юлташа тырă сутăн илес ĕçе саботаж тунине районсене кайса тĕрĕслеме тата тырă сутăн илес ĕçе пĕтерсе лартакансене суда пама хушнă.

Шупашкар райсовет исполкомĕн председательне Миронов юлташа, тырă илес ĕçрен пăрăннăскере, çакăн пирки асăрхаттарса хăварнă: çак питĕ кирлĕ ĕçрен малашне те пăрăнса тăрас пулсассăн, ăна председатель вырăнĕнчен кăлараççĕ.

Заготзерно пунктĕсенче тырă йышăнас ĕçе начар организациленĕшĕн ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Заготзерно управляющине Минаев юлташа выговор панă, çав выговора учет карточки çине çырса хумалла тунă. Минаев юлташа хатĕрлев пунктĕсене пĕр чăрăнмасăр ĕçлеттерме тата илсе пынă тырра часах йышăнмалла тума хушнă.

Чăвашпотребсоюз председательне Терентьев юлташа хатĕрлев пунктĕсенче чайнăйсем, закусочнăйсем халех уçма хушнă, çавăн пекех тата райпотребсоюзсемпе ялпосене колхозсемпе колхозниксенчен тырă сутăн илес ĕçре лайăх ĕçлеттерме хушнă.

Бюро ларăвĕнче тата çакна палăртнă: Уполнаркомзаг Герасимов юлташ тырă сутăн илес ĕçрен хăй те пăраннă, тата çав ĕçе Хатĕрлев наркоматĕн районсенчи уполномоченнăйĕсене те явăçтарман. Герасимов юлташа тырă сутăн илес ĕçе Уполнаркомзагăн пĕтĕм аппаратне явăçтарма, хатĕрлев пунктĕсенчи ситменлĕхсене пĕтерме тата леçсе паракан тырра шута илес ĕçе тивĕçлипе йĕркелеме хушнă.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ тата тырă сутăн илмелли плана Элĕк, Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Çĕрпÿ районĕсенче начар пурнăçланине палăртнă, çав районсенчи ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене Федотов, Добродушев, Захаров, Митьков юлташсене тата райисполкомсен председателĕсене Филимонов, Антонов, Полянин, Хабаров юлташсене тырă сутăн илмелли плансене пĕтĕмĕшпех тултарассишĕн тата тырра хатĕрлев пунктĕсене декабрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр леçсе пĕтерессишĕн вĕсем хăйсем ответлă пулса тăни çинчен асăрхаттарса хăварнă.

ВКП(б) райкомĕсене колхозниксем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе анлăн сарса яма, вĕсене тырра сутăн илес ĕçе ăнăçлăн пурнăçлани нимĕçсен фашистла захватчикĕсене аркатса тăкас ĕçре мĕнле пысăк вырăн йышăнса тănине ăнлантарса пама, мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене государствăна тырă сутас ĕçе активлăн хутшăнтарма хушнă.

Шупашкар больницин главнăй врачне И. М. КУЗНЕЦОВ юлташа РСФСР тава тивĕçлĕ врачĕн ятне панă

Халăх сывлăхне сыхлас ĕçре палла та чаплă ĕçсем тунăшăн РСФСР Верховный Совет Президиумĕ 1943 çулхи ноябрĕн 19-мĕшĕнчи Указ тăрăх 76 медицина работникне РСФСР тава тивĕçлĕ врачĕн хисеплĕ ятне панă.

Вĕсем хушшинче Шупашкар больницин главнăй врачĕ хирург Игнатий Максимович Кузнецов пур.

РСФСР тава тивĕçлĕ врачĕн хисеплĕ ятне илнĕ çынсем — совет врачĕсен аслă ăрăвĕн чапа тухнă çыннисем. Темиçе вунă çул хушши тăван çĕршывпа халăхшăн пĕтĕм чĕререн парăнса ĕçлени, нумай çулсем хушшинчи творчествăллă ĕç, вилĕмрен çăлса хăварнă çĕршер те пиншер çынсен пурнăçĕ,—акă мĕн ирĕк панă вĕсене çак пысăк та хисеплĕ ята илмешкĕн.

Чăваш ĕççыннийĕсем Игнатий Максимович Кузнецов юлташăн ĕçри мастерлăхне пĕлсе тăраççĕ. Вĕсем, çак хыпара пĕлсе, РСФСР тава тивĕçлĕ врачне И. М. Кузнецов юлташа малашне те халăх сывлăхĕшĕн нумай çулсем хушши çине тăрса ĕçлеме сывă сывлăх сунаççĕ.

ВЦСПС-ра

ВЦСПС, пĕр Халăх комиссариачĕн заказĕсене пурнăça кĕртекен заводсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943-мĕш çулхи октябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод лайăх ĕçленине палăртнă.

Фронтовиксен çемьисене пулăшаççĕ

СĔНТĔР. Çар çыннисен çемьисемпе вăрçă инвалидĕсемшĕн тăрăшасси пирĕн çĕршыври мĕнпур ĕççыннисен чыслă ĕçĕ пулса тăрать. Çавна ăнланса, МОПР райкомĕ пĕр госпитальне шефа илнĕ. Çак уйăхра районри ĕççыннисем çав госпитале 77 килограмм çу, 34 килограмм пыл, 1880 çăмарта, 140 килограмм какай, 2 центнер çăнăх, 173 килограмм кĕрпе, çур тонна çĕрулми, 320 килограмм купăста, 30 килограмм сухан, 34 килограмм табак парса пулăшнă. Кунсăр пуçне 500 килограмм ытла уйрăм посылкăсем янă.

А. СОЛОВЬЕВ.

Государствăна тырă сутни— фронта пулăшни пулать

Çак пысăк та пархатарлă ĕçе хутшăнмасăр пĕр колхозник те ан юлтăр!

Гаязов юлташ татах 55 пăт сутнă

ЕЛЧĔК. Хĕрлĕ Çар куллен кун çĕнĕ çĕнтерÿсем туса пыни районри колхозниксемпе колхозницăсене чĕререн хавхалантарать. Вĕсем, аслă çулпуç çĕршыва фронта татах та ытларах пулăшса тăма чĕнние асра тытса, хăйсен перекетленĕ тыррине государствăна сутаççĕ. Ноябрĕн 28-мĕшĕ тĕлне районĕпе государствăна 147.700 пăт тырă сутнă. Хатĕрлев пунктне 13.500 пăт леçсе панă. «Марс» колхоз членĕсем государствăна 10 пин пăт тырă сутрĕç. Колхоз председателĕ Гаязов юлташ, государствăна малтан 50 пăт тырă сутнăскер, халĕ татах 55 пăт сутнă. Çапла вăл государствăна пурĕ 105 пăт сутрĕ. Государствăна тырă сутас ĕçе районри пур колхоз членĕсем те активлăн хутшăнаççĕ.

Н. ВОЛКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Çулпуçа панă сăмахсене ĕçре пурнăçлар

КОМСОМОЛЬСКОЕ, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Комсомол 25 çул тултарас умĕн Сталин юлташ патне янă çырăва алă пусса, районри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем çапла чаплă сăмах пачĕç: «Пирĕн çĕре пĕр нимĕç те пулин таптама парахиччен пирĕн чĕресем канăç пĕлес çук; çак аслă кĕрешÿ пĕтиччен пирĕн аласем канса ларас çук; Тăван çĕршыв пире ырми-канми ĕçлеме хушма парахиччен пирĕн пуç мимисем ывăнас çук. Пĕр çул та сире йывăр туйăнмĕ, пĕр çăмăл та çĕнтермелле мар пек туйăнмĕ. Гитлерла пуçкасакансене—ылхан та вилĕм!» Халĕ вĕсем хăйсен мĕнпур вăйĕсене фронта пулăшма мобилизацилерĕç.

Çак кунсенче государствăна «Красный Октябрь» колхоз 3.040 пăт, «Трактор» колхоз—4.926 пăт, «Искра»—6.624 пăт тырă сутрĕç. Ку ĕçре колхоз çамрăкĕсемпе комсомолецсем активлăн хутшăнчĕç. «Трактор» колхозри комсомолецсем 16 центнер тырă сутнă. ВЛКСМ пуçламĕш организацин секретарĕ Е. Павлова юлташ хăйĕн перекетленĕ тыррине 3 центнер сутрĕ. «Искра» колхозра Сорокин, Зайцев, Ишмуратова комсомолецсем 5—10-шар пăт сутнă.

Е. ГОЛЛАНДЦЕВА,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Колхозниксем 20-30-шар пăт тырă сутаççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсемпе колхозниксем, хăйсен перекетлесе усранă тыррине государствăна сутса, нимĕç захватчикĕсене хамăр çĕршывран хăвăртрах хăваласа кăларма Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ. «Красная звезда», Сĕнтĕрпуç», «Малалла» колхозсем государствăна сутнă тырра хĕрлĕ обозсемпе хатĕрлев пунктне леçсех тăраççĕ.

Ку ĕçре колхоз активĕ хăй пример парать. «Моряк» колхоз председателĕ Ефимов юлташ государствăна 30 пăт тырă сутрĕ. Ăна курах ытти колхоз председателĕсем те Костров («Красная звезда»), Вдовин («Новая деревня»), Анпутинов («Красная Армия»), Васильев (Киров ячĕпе тăракан колхоз) юлташсем 20-шер пăт тырă сутрĕç. Çавăн пекех Яндаш ялсовет председателĕ Павлов юлташ 20 пăт, Сталин ячĕпе тăракан колхозри рядовой колхозник Караин юлташ 20 пăт тырă сутрĕç.

Ф. ИЛЬИН.

Малта пыракан колхозсен хÿттинче юлмалла мар

ВАРМАР, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). Малта пыракан колхозсем тата вĕсенчи колхозниксем государствăна хăйсен ирĕкĕпе чылай тырă сутрĕç. Çав енĕпе «Свобода», «Большевик», «Арапуç» колхозсене палăртса хăвармалла.

Анчах хăшпĕр ялсоветĕсемпе колхозсен руководителĕсем çакă питех те пысăк ĕç çине çиелтен пăхаççĕ. Сăмахран, «Новая жизнь» колхоз (председателĕ Яковлева юлташ) государствăна 75 тонна сутма пулнă, анчах паянхи куна пĕтĕмпе те 14 тонна çеç сутнă. «Пионер» колхоз (председателĕ Семенов юлташ) 65 тонна сутма пулса 4 тонна çеç сутнă.

Çавăн пекех Шăплат ялсоветĕнчи «Радио» колхозра та ку ĕçе питĕ начар йĕркеленĕ. Ялсовет председателĕ Николаева, колхоз председателĕ Тимофеев тата райкомпа райисполком уполномоченнăйĕ Осипов юлташсем хальхи вăхăтра государствăна тырă сутни мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен колхозниксене ăнлантарса паман. Ку колхозри колхозниксем çапла вара государствăна пĕр пăт та тырă сутман.

Колхозăн общественнăй фондĕнчен тырă илсе сутасси вăл—çăмăл ĕç. Ялсоветĕсемпе колхоз руководителĕсен государствăна тырă сутса, фронта пулăшас ĕçе мĕнпур колхозниксене явăçтарма тăрăшмалла, вĕсем хушшинчи массăллă-политикăллă ĕçе вăйлатмалла.

Государствăна тырă сутас ĕçре сÿрĕклĕх пулмалла мар

КÿКЕÇ, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). Мухтавлă Хĕрлĕ Çара куллен кун ытларах пулăшса тăрассине колхоз хресченĕсем хăйсен тивĕçĕ тесе шутлаççĕ. Çавна вĕсем хăйсен пархатарлă ĕçĕсемпе çирĕплетсе параççĕ. Государствăна обязательнăй йĕркепе тырă памалли плана тултарнă хыççăн районри колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем перекетленĕ тырра государствăна сутма тытăнчĕç. Паянхи куна пĕтĕмпе 86.000 пăт тырă сутнă. Колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе тивĕçлипе организациленĕ çĕрте тырă сутасси активлăн иртсе пырать.

Анчах та государствăна тырă сутас ĕçе пур колхозсенче те большевикла организацилемен-ха. Хăшпĕр ялсоветĕсемпе колхозсем сÿрĕк ĕçлеççĕ. Çапла, Шĕнерпуç тата Кÿкеç ялсоветĕсенчи колхозсенче массăллă-ăнлантару ĕçне кирлĕ пек туса пыман пирки тырă сутасси вăраххăн пулса пырать. Ялсоветĕне колхоз руководителĕсем тата ялти актив çак питех те кирлĕ ĕçе пурнăça кĕртес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемеççĕ.

Государствăна сутнă тырра хатĕрлев пунктĕсене леçес ĕç начар пулса пырать. Паянхи куна сутнă тырăран 17.202 пăт кăна хатĕрлев пунктĕсене леçнĕ. Мĕншĕн-ха ун пек пулнă? Сутнă тырра вăхăтра леçсе пама колхозсенче туртăм вăйĕ çителĕклĕ тăранах пур. Апла пулсан тырă леçесси юлса пыни пĕтĕмпех çаварăнăçусăр, ĕçе пĕлсе организацилеменнинчен килет. Фактсем те çавăн çинчен калаççĕ. Крупская ячĕпе тăракан колхозран тырă леçме кайнă колхозниксем икĕ хут каялла таврăнса килнĕ. Вĕсем мĕн сăлтавпа таврăннине никам та тĕплĕн тĕрĕслемен. Сутнă тырра хатĕрлев пунктĕсене леçесси «Пионер» колхозра (председателĕ Ефимов), «Молния» колхозра (председателĕ коммунист Иванов) тата Ильич ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Андреев) питех те сÿрĕк пырать.

Партипе совет организацийĕсен колхозниксемпе колхозницăсем хушшинчи массăллă-ăнлантару ĕçне вăйлатмалла. Çак ответлă та кирлĕ ĕçе тунă çĕрте нимĕнле сÿрĕклĕх те пулмалла мар.

Фронтпа çĕршыв валли

КАЛИНИНО, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). Юманайĕнчи «Коминтерн» колхоз членĕсем государствăна кооперации урлă 3.000 пăт тырă сутрĕç. Ăна пĕтĕмпех хатĕрлев пунктне леçсе пачĕç. Тырă сутас ыйтупа пулса иртнĕ пухура колхозниксем фронтпа çĕршыва тырпул кирлĕ таранах тăратма хатĕр пулни синчен каларĕç. Фронтовик арăмĕ А. Кузнецова юлташ, 10 пăт тырă сутма пулса, çапла каларĕ:

— Манăн ывăл нимĕç захватчикĕсене хамăрăн ирĕклĕ çĕршывран хăваласа кăларассишĕн çапăçать. Эпир хамăрăн ывăл-хĕрсене çĕнтерÿ тума пулăшатпăр. Çĕнтерÿшĕн пулсан, нимĕн те шеллеместпĕр,—терĕ.

Нумай колхозниксем сутнă тырра çав кунах леçсе пачĕç.

Б. ШОРНИКОВ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Пирĕн земляк генерал-лейтенант Александр Николаевич БОГОЛЮБОВ юлташ (Шупашкар хулинчен).

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿре çапăçу операцийĕсене пĕлсе те хастарлăн ертсе пынăшăн тата çав операцисене вула тунă çитĕнÿсемшĕн А. Н. БОГОЛЮБОВ юлташа СССР Верховный Совет Президиумĕн 1943 çулхи апрелĕн 9-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх ПĔРРЕМĔШ СТЕПЕНЬ КУТУЗОВ орденĕпе наградăланă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 27-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 27-мĕшĕнче пирĕн çарсем ПРОПОЙСКРАН хĕвеланăçнерехри районра, тăшман хирĕç тăнине тата унăн контратакисене сирсе-сирсе ярса, малалла тапăнса пынă, темиçе ял тытса илнĕ.

СОЖ шывĕпе ДНЕПР шывĕ хушшинче, ГОМЕЛЬТЕН çурçĕр-хĕвеланăçнерехри районра, пирĕн çарсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, Гомель облаçĕнчи район центрĕсене—ЧЕЧЕРСК хулине тата УВАРОВИЧИ ятлă яла йышăнса илнĕ. Çавăн пекех тата 80 ял ытла тытса илнĕ, вĕсем хушшинче АННОПОЛЬЕ, МАЛЫНИЧИ, СОЙКИ, НАУХОВИЧИ, ШЕПОТОВИЧИ, ДУДИЧИ, ЛИПА, МИХАЛЕВКА, ПЫТЬКОВКА, ДУРАВИЧИ, ЛАПИЧИ, ОСОБИН, БЛЮДНИЦА, РУДЕНЕЦ, РОГИ, АЗДЕЛИН, ИВАНОВКА, ТЕЛЕШИ, ГАЛЕЕВКА, ЗАДОРОВКА ятлă ялсем тата КОСТЮКОВКА, УЗА, ПРИБОР, ЯКИМОВКА ятлă чугун çул станцийĕсем.

БЕРЕЗИНА шывĕн анат тăрăхĕнчи районра пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, СОКОЛ, ВИНОГРАДОВ, ЗАКРЕВ, ЯКИМОВСКАЯ СЛОБОДА, ЧИРКОВИЧИ, ЗДУДИЧИ, СУДОВИЦА, ПРУДОК, МОЛЬЧА, КОБЫЛЬЩИНА ятлă ялсене тытса илнĕ.

ПРИПЯТЬ шывĕн анат тăрăхĕнчи районра пирĕн çарсем Полесье облаçĕнчи район центрне — ЕЛЬСК хулине тытса илнĕ, çавăн пекех тата ОГОРОДНИКИ, КАРПОВИЧИ, ДВОРИЩЕ, РУДНЯ, БЕЛОБЕРЕЖСКАЯ, БЕЛЫЙ БЕРЕГ ятлă ялсене йышăнса илнĕ.

КОРОСТЕНЬ, ЧЕРНЯХОВ тата БРУСИЛОВ районĕсенче пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене сире-сире янă.

КРЕМЕНЧУГ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшмантан вăйлă çирĕплетнĕ темиçе пункта тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Ноябрĕн 26-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 99 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата сÿлелле перекен артиллери тăшманăн 14 самолетне персе ÿкернĕ.

НОЯБРĔН 28-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 28-мĕшĕнче пирĕн çарсем СОЖ тата ДНЕПР шывĕсем хушшинче, ГОМЕЛЬ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, çаплах ăнăçлăн наступлени туса пынă, ГОМЕЛЬ облаçĕнчи район центрне — БУДА КОШЕЛЕВСКАЯ хулине тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 150 пункта йышăнса илнĕ, вĕсем хушшинче — ЖАБИН, СКАРТЫНЬ, ЯЦКОВЩИНА, ГЛЫБОЧИЦА, МОТНЕВИЧИ, РОВКОВИЧИ, ЗАБОЛОТЬЕ, КОРОНКА, ЛИПИНИЧИ, ШАРЫБОВКА, КОШЕЛЕВ, ПОТАПОВКА, МОРОЗОВИЧИ, ЖИТАНЕЖ, НЕДОЙКА, СТАРАЯ БУДА, ЧЕБОТОВИЧИ, ХОВХЛА, ЧЕРНОЕ ятлă пысăк ялсем тата БУДА КОШЕЛЕВСКАЯ, ШАРЫБОВКА ятлă чугун çул станцийĕсем.

БЕРЕЗИНА шывĕн анат тăрăхĕнчи районра пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, 24 ял тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче — ЖИРХОВКА, НОВОМАРКОВИЧИ, ЗЛОМНОЕ, ШАЦИЛКИ, ЛИПНИКИ, ГОМЗА, ЧЕРНИН, ГОРОХОВИЩИ, ПРУЖИНИЩЕ, ВЬЮНИЩЕ ятлă ялсем.

ПРИПЯТЬ шывĕн анат тăрăхĕнчи районра пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, малалла куçса пынă, ЧЕРНОВЩИНА, СЛОБОДКА, НОВЫЙ ЛОМЫШ, СТАРЫЙ ЛОМЫШ, ГРИДНИ, ВЕРБОВИЧИ, РУДНЯ СМОЛЕГОВСКАЯ ятлă ялсене тытса илнĕ.

КОРОСТЕНЬ, ЧЕРНЯХЕВ тата БРУСИЛОВ районĕсенче пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене сире-сире янă.

КРЕМЕНЧУГ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса тата унăн контратакисене сире-сире ярса, вăйлă çирĕплетнĕ темиçе пункта тытса илнĕ.

ДНЕПР шывĕн кукринче, ДНЕПРОПЕТРОВСК хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та нимĕç оборонин вăйлă çирĕплетнĕ ВАСИЛЬЕВКА, МЕНЖИНКА, ЕКАТЕРИНОВКА, ПЕРВОМАЙСКИЙ, РАСТАНЬЕ, ИВЕРСКОЕ, НИКОЛАЙ-МОИСЕЕВКА, КАШНАРОВКА, АЛЕКСАНДРОВКА, ПЕТРИКОВКА, ПРОПАШНОЕ, ВОРОНОВКА, ПАВЛОВКА, НОВО-ПОКРОВСКОЕ, СУДАНОВКА ятлă пунктсене тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 28-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

Ноябрĕн 27-мĕшĕнче пирĕн çар сем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 74 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çÿлелле перекен артиллери тăшманăн 22 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Гомель хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах ăнăçлăн наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 150 пункта ытла тытса илнĕ. Совет çарĕсем пыра-пыра çапнипе тăшман каялла чакать. Хăй хыçĕнчен кĕперсене сирпĕнтере-сирпĕнтере хăварать, çулсем çине минăсем лартса хăварать. Пĕр соединени чаçĕсем нимĕçсене хăваласа пырса, Гомель облаçĕнчи район центрне — Буда-Кошелевская ятлă хулана тытса илнĕ. Тепĕр соединени чаçĕсем нимĕçсен тĕреклетнĕ икĕ пунктĕнчи гарнизонне çавăрса илнĕ те хаяр çапăçура гитлеровецсен пысăк пайне пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 700 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Нимĕç салтакĕсене чылайĕшне тыткăна илнĕ. Çав пунктсенче пирĕн боецсем 16 тупă, 12 миномет, 70 пулемет тата 2 боеприпас склачĕ тытса илнĕ.

* * *

Березина шывĕн анат тăрăхĕнчи районра пĕр соединени чаçĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕре-çĕмĕре, çаплах наступлени туса пынă, 24 ял тытса илнĕ. Çав ялсемшĕн пынă çапăçусенче нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Тăшмантан ултă кĕпçеллĕ 4 миномет, тĕрлĕ çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 36 автомашина тата 2 радиостанци тытса илнĕ.

* * *

Припять шывĕн анат тăрăхĕнчи районра пирĕн çарсем, çул-йĕрсĕр тата вăрманлă-шурлăхлă вырăнсенче кĕрешсе, тăшмантан темиçе ял тытса илнĕ. Нимĕçсем темиçе хутчен те контратака тума хăтланнă. Пирĕн боецсем тăшман контратакисене нурне те сирсе янă, нимĕç пехотине икĕ ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур

* * *

Брусилов районĕнче тăшман пехотин икĕ полкĕ тата 50 танкĕ пирĕн позицисене кун каçиччен 8 хут атакăланă. Совет пехотинецĕсем нимĕç танкĕсене малалла иртерсе янă та вăйлăн персе тăрса гитлеровецсене сĕр çумне лапчăнтарса хунă. Нимĕç пехоти атакăна кайма тăрас тесе хăтланнисем ăнăçман. Вăл каялла чакнă. Çапăçу хирĕнче унăн салтакĕсемпе офицерĕсен 800 вилли ытла выртса юлнă. Малалла татса кĕнĕ нимĕç танкĕсене пирĕн артиллеристсемпе минометчиксем пенĕ. 28 танка, хăй тĕллĕн çÿрекен 4 тупа тата 4 транспортера çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Нимĕçсен ытти танкĕсем те вара часах юрăхсăра тухнă.

* * *

Кременчуг хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем, малалла куçса пырса, тăшманăн темиçе пунктне тытса илнĕ. Пĕр кун хушшинче гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллери нимĕçсен 15 танкне персе çĕмĕрнĕ. Нимĕçсенчен 7 тупă, 2 бронетранспортер, 10 миномет, боеприпас складне тата инженерла пурлăх складне тытса илнĕ.

* * *

Днепр шывĕн кукринче, Днепропетровскран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, пĕр гвардейски соединенин чаçĕсем, танксемпе çыхăнса кĕрешсе, артиллери персе тăнă хыççăн тăшмана атакăланă. Нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе малалла куçса, пирĕн боецсем темиçе ял тытса илнĕ. Тăшман пысăк çухату тÿснĕ. Пĕр участокра кăна тăшманăн 1.000 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн летчиксем тăшман войскисене пыра-пыра çапнă, нимĕçсен 20 танкне çити тата 70 автомашинине пĕтерсе тăкнă, горючи складне тата боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă. Тăшманăн Апостолово ятлă чугун çул узелĕнче тăнă çар эшелонĕсем çине нумай бомба пăрахнă.

Сывлăшри çапăçусенче кун каçиччен нимĕçсен 17 самолетне персе ÿкернĕ

* * *

Хура тинĕсре тăшманăн 1.000 тонна таякан суднине, хуралта çÿрекен карапне, хуралта çÿрекен 2 катерне, хăварт çÿрекен 2 десант баржине тата типĕ грузсем турттарса çÿрекен баржине шыва путарнă.

* * *

Могилев облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен пĕр пысăк ялта тăракан гарнизонне аркатса тăкнă. 70 гитлеровеца вĕлернĕ. Могилев облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ, засада туса, тăшманăн автоколоннине тапăннă, çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 6 автомашинăна вĕсем çинче ларса пыракан 22 гитлеровецпа пĕрлех пĕтерсе тăкнă.

* * *

Невель хули районĕнче нимĕçсен 81-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 189-мĕш полкăн 3-мĕш ротинчи 1-мĕш взвод хăй ирĕкĕпе тыткăна парăннă. Çав взвод командирĕ Рихард Пешель фельдфебель çапла каласа кăтартнă: «Пирĕн батальона, икĕ кÿлĕ хушшинчи вăрмана пăшалпа персе тĕрĕслесе, çавăнти пĕр çÿлĕ вырăна йышăнса илме хушрĕç. Çав приказа пурнăçланă чухне вырăссем питĕ хаяррăн хирĕç тăчĕç. Ăнăçсăр атакăсем тăва-тăва, пирĕн батальон йывăр çухату тÿсрĕ. Эпĕ ертсе пыракан взвод кÿлĕ патне пычĕ, вырăссем пирĕн фланга тухрĕç те пире пĕтĕмĕшпех çавăрса илме пуçларĕç. Юлташсемпе канашласа илсен, эпĕ хам салтаксене пĕрле пухрăм та эпир мĕнле лару-тăрăва кĕрсе ÿкнине каласа патăм. Унтан эпĕ вĕсене çапла калартăм: «Кам тыткăна парăнас тет—кунта юлтăр, кам тыткăна хирĕç—ăçта каяс тет, унта кайтăр», терĕм. Салтаксем чылай вăхăт хушши канашларĕç. Вара ман взводран 4 салтак кăна каялла кайрĕç, ытти 32 салтак алăри хĕç-пăшала пăрахса тыткăна парăнчĕ. Вырăссем ăнăçлă наступлени туса пынине кура, эпĕ тата ман юлташсем çакна пĕлсе çитрĕç: нимĕç çарĕ нумайччен чăтса тăма пултарайрас çук. Апла пулсан, вăрçа малалла тăсса пыни шанчăксăр ĕç пулса тăрать, çавăнпа та хамăн пурнăçа тата мана шанса панă салтаксен пурнăçне çăлса хăварас тесе, эпĕ тыткăна парăнтăм».

Завод çулталăкри производство планне тултарнă

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод ноябрĕн 27-мĕшĕнче çулталăкри производство планне тултарчĕ.

Уйрăмăнах Федченко юлташ начальник пулса ĕçлекен цех коллективĕ паллă çитĕнÿсем тунă. Кунти слесарь Мищенко юлташ çулталăкри плана 478 процент, слесарь Офицеров 406 процент тултарнă. Фрезеровщик Королев юлташ 10 уйăх хушшинче кăна хăйĕн çулталăкри планне 336 процент тултарнă. Çамрăк рабочисем-токарьсем Мухаметов, Петров юлташсем кашниех çулталăкри нормăна 150-шар процент пурнăçа кĕртнĕ.

Завод коллективĕ çулталăк вĕçлениччен фронтпа çĕршыв валли планран ирттерсе ытларах продукци парассишĕн кĕрешет.

(ХАМĂР ИНФОР.).

Планран ирттерсе—30 пин тенкĕлĕх продукци

ÇĔМĔРЛЕ. Районри апат-çимĕç комбиначĕ çулталăкри плана ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 101 процент чухлĕ тултарнă. Çак çитĕнĕве комбинат коллективĕ социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пынипе тата ĕçе тĕрĕс организациленипе тунă. Кунта кашни рабочипе работница, инженерла-техникла работник пĕр-пĕрнипе ăмăртса ĕçлет. Ăмăрту договорĕсене мĕнле пурнăçа кĕртнине тăташах тĕрĕслеççĕ, малта пыракансен опытне анлăн сараççĕ. Çапла, комбинатри кашни рабочи ĕç нормине, вăтамран 135 процент таран тултарать. Нормăна тултарманнисем кунта пĕр çын та çук.

Уйрăмăнах типĕтекен цех коллективĕ тухăçлăн ĕçлет. Вăл плана кашни уйăхрах 200 процент таран тултарать. Çак цехри стахановкăсем Котова. Поличева юлташсем кашни икшер норма е ытларах тултараççĕ. Нумаях пулмасть Поличева юлташа смена мастерĕ пулса ĕçлеме лартнă. Вăл ку ĕçре те лайăх тĕслĕхсем кăтартать.

Апат-çимĕç комбинатĕнче çĕнĕ производствăна — мальтознăй цеха ĕçе янă. Вăл цехри работница Кутырева тата ытти чылай юлташсем ĕç нормине яланах тултарса ĕçлеççĕ. Кондитерски цех коллективĕ те начар мар ĕçлет. Продукци пахалăхне лайăхлатса пырать.

Комбинатри рабочисемпе работницăсем, халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ вăя шеллемесĕр ĕçлеме чĕннине ответлесе, çулталăк вĕçлениччен планран ирттерсе 30 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларма пулчĕç. Халĕ илнĕ обязательствăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

К. ДМИТРИЕВ.

Вăрман хатĕрлевĕнчи фронтовой уйăхлăх

Милютинăри вăрман хатĕрлекенсен çитĕнĕвĕсем

Вăрман хатĕрлевĕнче фронтовой уйăхлăх пуçланнă чухне Милютинăри механизациленĕ вăрман пунктĕнчи рабочисемпе работницăсем хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. Кашни вăрман касакан тата турттаракан кулленхи нормăна 150 процентран кая мар тултарма йышăннă. Çак обязательствăна пурнăçа кĕртес тесе, вăрман пунктĕнчи парторганизаципе профсоюз комитечĕ вăрманта ĕçлекенсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе анлăн туса пырать, социализмлă ăмăртăва кунран кун вăйлăраххăн сарассишĕн кĕрешет. Вăрман пунктĕнчи пур участоксемпе бригадăсенче те Сталин юлташ докладне тата фронтовой уйăхлăхăн задачисем çинчен тĕплĕн ăнлантарса панă. Кулленхи ĕç графикне кашни рабочи патне çитернĕ.

Халĕ вăрман пунктĕнчи нумай рабочисемпе работницăсем обязательствăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Иртнĕ пилĕк кун хушшинче мастер Тимофеев юлташ ертсе пыракан Пихтулинăри участок кулленхи плана план 102 процент таран тултарса пычĕ. Механизациленĕ çул коллективĕ татах та лайăхрах результатсем парать, вăл кулленхи плана 150 процент тултарать.

Яковлев юлташ мастер пулса ĕçлекен участок та хăйĕн ĕçне чылаях лайăхлатрĕ. Вăл фронтовой уйăхлăхăн малтанхи виçĕ кунĕ хушшинче графика пурнăçа кĕртеймен. Çакăн хыççăн унта ĕçри çитменлĕхсене палăртас шутпа актива пухса каласнă. Актив ĕçе лайăхлатмалли майсене кăтартса пачĕ. Вĕсене пурнăçа кĕртсе, участок графика ăнăçлăн тултарма тытăнчĕ.

Вăрман пунктĕнче стахановла ĕçлекенсен йышĕ кунсерен ÿссе пырать. Пихтулино участокĕнчи вăрман касакансем П. Коноваловпа Родионов юлташсем нормăна 240-шер процент тултарма тытăнчĕç. Моторлă пăчкăпа ĕçленĕ çĕрти мотористсем—Шуваловпа Богданов юлташсем нормăна 140 процентран кая мар тултараççĕ. Вăрман турттаракан Синельниковпа Дригуев юлташсем те кулленех икшер норма таран тултараççĕ. Юлашки кунсенче Р. Каримовпа Буминов юлташсен бригадисем те плана ирттерсе тултарма тытăнчĕç.

Вăрман пункчĕн коллективĕ халĕ çулталăкри плана срокчен тата лайăх пахалăхпа тултарассишĕн çине тăрса ĕçлет

П. КАСЕЕВ.

Колхозниксем вăрман хатĕрлевĕнче

КАНАШ. Районри нумай колхозсем вăрман хатĕрлевĕнчи уйăхлăха активлăн хутшăнчĕç. Халĕ вăрманта ĕçлекенсен хисепĕ планпа палăртнинчен ытларах шутланать.

Доронин ячĕпе тăракан колхоз членĕ Мария Капитонова юлташ вăрман турттарнă çĕрте нормăна куллен ирттерсе тултарать. Вăрман касакансем Григорьев, Игнатьева юлташсем те нормăна тултарса ĕçлеççĕ.

Сиккассинчи Шмидт ячĕпе тăракан колхоз членĕ Петров юлташ юлашки вăхăтра куллен икĕ норма тултарма тытăнчĕ.

И. МАКСИМОВ.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Америкăн 5-мĕш армийĕн фронтĕсенче артиллерирен хирĕ-хирĕç персе тăна тата патрульсем активлăн çапăçнă. Англин 8-мĕш армийĕн фронтĕсенче нимĕнле улшăну та пулман. Англи çарĕсем хăйсен позицийĕсене кăштах лайăхлатнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Югославири объекчĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, акăлчансен 8-мĕш армийĕ, вĕçĕмсĕр çумăр çуса тăнине пăхмасăрах, Санкро шывĕнчен çурçĕртерехри районра кĕпер умĕнчи укрепленисене аслăлатнă, хăйĕн позицийĕсене лайăхлатнă. Англин 8-мĕш армийĕн ытти участокĕсенче уйрăм тытăçусем пулса иртнĕ. Америкăн 5-мĕш армийĕн фронтĕнче ноябрĕн 26-мĕшĕнче тăшманăн икĕ контратакине сирсе янă. Артиллерирен пĕр-пĕрин çине вăйлăн персе тăраççĕ.

СОЮЗНИКСЕМ САМОС УТРАВНЕ ХĂВАРНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: хăйсене панă задачăсене пурнăçа кĕртнĕ хыççăн, Англипе Греци çарĕсем тата Итали çарĕсен чаçĕсем пĕр çухатусăр Самос утравĕ çинчен каялла тухса кайнă. Вĕсемпе пĕрле утрав çинчи мирлĕ çынсем те нумайĕшĕ кайнă. Вĕсем утрав çинчен тухса кайни темиçе кун çитет ĕнтĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕн самолечĕсем Майн çинчи Франкфурта тата Берлина тапăннă.

Ноябрĕн 26-мĕшĕнче кăнтăрла Америкăн йывăр бомбардировщикĕсем Германин çурçĕр-хĕвеланăç пайне тапăннă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер союзниксен авиацийĕ Па-де-Кале районне, Котантен çурутравне, Шербурги доксене тата Францири ытти объектсене тапăннă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ БЕРЛИНА ÇĔНĔРЕН ТАПĂННИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин йывăр бомбардировщикĕсем Берлина тата тепĕр хут пырса тапăннă. Берлина ĕнтĕ 5-мĕш çĕр вĕçĕмрен пырса тапăннă.

ЛĂПКĂ ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕ пĕлтернĕ тăрăх, паян Австрали çарĕсем Саттельберга (Çĕнĕ Гвинея) тытса илнĕ. Союзниксен танкĕсемпе бомбардировщикĕсем Япони çарĕсене пысăк сиен кÿнĕ тата трофейăсем чылай тытса илнĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 26-мĕшĕнче Америка бомбардировщикĕсен питĕ пысăк соединенийĕ Бремен портне пырса тапăннă тата Çурçĕр Франци тĕлĕнче операцисем тунă. Англин, доминионсен тата союзниксен истребителĕсем бомбардировщиксене пулăшса пынă. Тăшманăн 56 самолетне пĕтерсе тăкнă.

Рейтер агентстви каланă тăрăх, Бремена 1000 самолета яхăн пырса тапăннă.

Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Штутгарта тапăннă.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШУЛЛĂ ШТАТСЕН ТИНĔС-ÇАР ВĂЙĔСЕМ ÿСНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, США-н тинĕс-çар министрĕ Нокс пресс-конференцире çапла каланă: вунпĕр уйăхран та катăкрах вăхăт хушшинче США тинĕс-çар флочĕ валли вăрçă карапĕсем туса кăларасси икĕ хут ÿсрĕ. Карапсем кăтартнă хисепне планпа палăртнинчен 5 эрне маларах тултарнă. Çак çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне США флочĕн 419 вăрçă карапĕ пулнă. Пĕр çул хушшинче Америкăн 21 вăрçă карапне путарнă. Çапла ĕнтĕ, США-н тинĕс-çар флочĕн халхи вăхăтра 817 карап шутланса тăрать, çитес икĕ эрнере çав путнă 21 карап вырăнне çĕнĕрен туса кăлараççĕ.

1943-мĕш çулта туса кăларнă вăрçă карапĕсем пĕтĕмпе 1 миллион тонна таяççĕ, çакă вăл пĕтĕм тинĕс-çар флочĕн тоннажне 60 процент ÿстерет. Çак çулта туса кăларнă подводнăй лодкăсем январĕн 1-мĕшĕ тĕлне пулнă лодкăсен 30 процентчĕ пулса тăраççĕ. Çак çулта туса кăларнă десант антармалли суднăсен хисепĕ январĕн 1-мĕшĕ тĕлне пулнă хисепĕн 50 процентчĕ шутланать.

Нокс каланă тăрăх, çак çулта США-ра тинĕс-çар флотне 40 авианосец хушăннă. Çĕнĕ йышши авианосецсем чи лайăх та инçене çÿрекен тата вăйлă карапсем шутланаççĕ.

Нокс каланă тăрăх, США-н тинĕс-çар флотĕнчи вăрçă самолечĕсен хисепĕ çак çул пĕтнĕ тĕле «1943-мĕш çул пуçланнă чухнехипе танаштарсан, виçĕ хут ытла ÿсмелле».

Чăваш АССР Прокуратуринче

Государствăна сутнă тырра хатĕрлев пунктĕнче йышăнас ĕçе юриех чăрмантарнăшăн «Заготзерно» Канашри пункчĕн технорукне—Михайлова 3 çул хушши тĕрмере лармалла тата складсен заведующине—Петрова 2 çул хушши тĕрмере лармалла тунă.

Колхозниксем государствăна сутма йышăннă тырра салатса пĕтерсе саботаж тунăшăн Октябрьски районри «Коммунизм» колхоз председательне Владимирова, «Социализм» колхоз председательне Васильевăна арестлесе суда панă.

Канаш районĕнчи Крупская ячĕпе тăракан колхозăн государствăна сутнă тыррине хатĕрлев пунктне турттарса кайнă чухне вăрланăшăн çав колхоз членне Иван Григорьева арестлеçе суда панă.

Колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлемелли закона большевикла пурнăçа кĕртер

Стахановла ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке колхозсенче ĕç тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе пысăк вăй пулса тăчĕ. Вăл колхозниксен пуçарулăхне çĕклеме, çапла вара государство валли ялхуçалăх продукчĕсем тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем ытларах туса хатĕрлеме май пачĕ. Ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке государствăпа колхозсен тата уйрăм колхозниксен интересĕсене пĕтĕçтерсе тăрать.

Ударлă, стахановла ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке çав тери пысăк вăй пулса тăнине эпир кашни районра, кашни колхозра куратпăр. Акă, Сĕнтĕр районĕнчи «Ядро» колхоза илер. Вăл колхозра кăçал малтанхи тăхăр уйăх хушшинче кашни ĕнерен 1.400 литр сĕт суса илнĕ. Çапла, колхоз планна палăртнинчен 6.300 литр ытларах сĕт илнĕ. Çакăншăн фермăра ĕçлекен колхозниксене хушса тÿлемелли йĕркепе 945 литр сĕт памалла. «Знамя труда» колхозри чăх-чĕп ферминче ĕçлекен колхозница Евдокия Музыкова юлташ хăй пăхакан 114 чăхран 11.856 çăмарта илнĕ. Çавăншăн вăл хушса тÿлемелли йĕркепе 241 çăмарта илет. «Юнга» колхозри свинарка Ф. Вазикова юлташ 8 сысна ами пуçне 159 сысна çури çитĕнтерне. Çавăншăн вăл 14 сысна çури илет.

Тырпул тата пахча-çимĕç тухăçлăхне ÿстернĕшĕн хушса тÿленине илекен колхозниксемпе колхозницăсем те сахал мар. Вăрмар районĕнчи «Красная Кубня» колхоз кăçал 20 гектар çинчен кашни гектартан 286 центнер çĕрулми пухса илнĕ. Çĕрулми лартса тунă çĕрте ĕçленĕ колхозниксене хушса тÿлемелли йĕркепе 704 центнер çĕрулми валеçсе панă. Çавăн пекех Тăвай районĕнчи «Красная Чувашия» колхозри пахча-çимĕçсем лартса тăвакан звено гектартан 190 центнер купăста тата 245 центнер сахăр кăшманĕ, 206 центнер помидор пухса илнĕ. Вĕсем хушса тÿлемелли йĕркепе 500 центнера яхăн пахча-çимĕçсем илеççĕ.

Колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлемелли закона çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пынă çĕрте тырпул тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстермелли плансене яланах ирттерсе тултараççĕ. Ĕçшĕн хушса тÿлес йĕркене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе Вăрнар, Ишлей районĕсенче лайăх ĕçлеççĕ. Çавăнпа та вăл районсенче хушса тÿленипе илекен бригадăсемпе звеносем тата колхозниксемпе колхозницăсем йышлăн шутланаççĕ.

Анчах та ĕçшĕн хушса тÿлемелли закона республикăри пур колхозсенче те тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пымаççĕ-ха. Хăшпĕр колхозсенче вăл йĕркене пăснисем те пулнă. Чылай районсенче тырпул туса илмелли тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плансене тĕрĕс тумаççĕ. Акă, сăмахран, Шупашкар районĕнчи «Крахмал» колхоза илер. Вăл районра малта пыракан колхозсенчен пĕри шутланать. Анчах унта тырпул туса илмелли плана тĕрĕс туман. Бригадăсене уйрăм культурăсем тăрăх заданисене ÿстерсе панă пулнă. Колхоз, пĕтĕмĕшпе илсен, тырпул тухăçлăхне ÿстермелли плана 30—40 процент ирттерсе тултарнă пулсан та, хăшпĕр бригадăсем хушса тÿленине илме пултарайман. Çакăн пек тĕрĕс мар плансем туни ĕçшĕн хушса тÿлессине пĕтерсе лартма пултарать. Чăн та, унта асăннă йăнăшсене çийĕнчех пĕтернĕ. Анчах та пирĕн малашнехи ĕçре ун пек йăнăшсем тумалла мар.

Тырпул туса илмелли тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстермелли плансене колхозсем патне çитернĕ чухне, чи малтан, çаксене асра тытмалла: планра тырпул туса илмелли е тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстермелли задани хисепĕ районри задани хисепĕнчен кая мар пулмалла. Çавăн пекех бригадăсемпе звеносене памалли заданисен хисепĕ те колхозăн пĕтĕм заданийĕн хисепĕнчен кая мар пулмалла. Бригадăсемпе звеносем патне заданисем çитернĕ чухне вĕсен ĕç условийĕсене шута илес пулать.

Ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕркене пурнăçа кĕртессине бригадăсемпе звеносенче ĕçлекенсем улшăнса тăни те чылай чăрмавсем кÿме пултарать. Колхозниксене пĕр ĕçрен тепĕр ĕçе куçарни учет ĕçне йĕркесĕрлĕхсем кÿрет, ответлăха чакарать. Чылай колхозсенчи бригадăсемпе звеносем хăйсен ĕçĕсен результачĕсене уборка пуçланиччен кăна кураççĕ. Мĕншĕн тесен уборка вăхăтĕнче вĕсем туса илнĕ тырпулсене, кĕтмен çĕртенех, ытти бригадăсен тыррисемпе хутăштарса яраççĕ. Çапла вара, хушса тÿлемелли майсене пĕтереççĕ. Чылай колхозсенче кашни колхозник мĕнле ĕçленине вăхăтра шута илмеççĕ.

Ĕçшĕн хушса тÿлеме колхозсенче учет ĕçне йĕркеллĕн туса пыни кирлĕ. Уйрăмăнах заданисене мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕс шута илмелле. Çавсене çырса пыма уйрăм кĕнекесем пур. Анчах та хăшпĕр колхозсенче вăл ĕçе тивĕçлипе организацилемен-ха. Колхозсен счетовочĕсем час-часах çавăн пек учет кĕнекисем пулманни пирки пăшăрханаççĕ. Нумай чухне вĕсем: тырпул тухăçлăхĕ, выльăх-чĕрлĕх продуктивноçĕ пысăк мар, çавăнпа та хушса тÿлемеллисем çук, тесе ĕнентерме пăхаççĕ. Кун пек каланисем пачах та тĕрĕс мар. Колхозниксемшĕн тăрăшман çынсем çеç ун пек калама пултараççĕ.

Колхозсенче ĕçкунĕсем тăрăх тырпулсем валеçес вăхăт çывхарса килет. Райçĕрĕç пайĕсен, МТС работникĕсен тата ялхуçалăх специалисчĕсен колхозсене учет ĕçне лайăх йĕркелеме пулăшмалла. Анчах та хальхи вăхăтра çав тĕлĕшпе нумай çĕрте çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха.

Колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке çинчен йышăннă постановленире çĕрĕç органĕсемпе МТС-сене бригадăсенче звеносем организацилес, звеносене ертсе пыма пултарулăх çынсене уйăрас тата звеносем çумне уйрăм культурăсем çирĕплетес енĕпе куллен тимлĕн ĕçлеме хушнă. Пирĕн республикăра звеносене пайланса ĕçлесси 1939 çулта сарăлма тытăнчĕ, вăл лайăх результатсем пачĕ. Анчах та юлашки çулсенче, чылай колхозсенче звеносене тивĕçлипе ертсе пыман пирки, вĕсенчен чылайĕшĕсем саланса кайнă. Çапла, республикăри колхозсенче 1939 çулта 1.178 звено, 1940 çулта 13.202 звено пулнă, 1941 çулта вара 10.062 звено, 1942 çулта 5.958 звено çеç юлнă. Малтанласа шутланă тăрăх, кăçал пирĕн республикăра 4.000 звено кăна юлнă. Звеносен хисепĕ чакни вĕсене районри организацисем тата çавăн пекех Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ тивĕçлипе хакламан пирки пулнă.

Çĕрĕç органĕсен звеносене йышлăн та йĕркеллĕн организацилес тĕлĕшпе халех тимлĕн ĕçлеме тытăнмалла. Звеносене организациленĕ чухне вĕсем çумне çĕр участокĕсем çирĕплетсе памалла.

Колхоз хресченĕсем, Сталин юлташăн ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă докладĕпе хавхаланса, 1944 çулхи çуракине ăнăçлăн ирттерме пысăк тимлĕхпе хатĕрленеççĕ. Колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлемелли закона большевикла пурнăçа кĕртсе пыни колхозсенче ĕç тухăçлăхне татах та ÿстерме, çапла вара хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Çара ытларах пулăшма майсем туса парать.

И. Т. КОСМИНСКИЙ,
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн планпа финанс отделĕн начальникĕ.

Пĕлтерÿ

1943 çулхи декабрĕн 2-мĕшĕнче каçхине, 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашская ур., 6) агитколлективсен руководителĕсем, докладчиксем тата беседчиксем валли инструкциллĕ доклад пулать.

Доклад теми: **«Декабрĕн 5-мĕшĕ—Сталинла Конституци кунĕ.»**

Докладчик — ялхуçалăх институчĕн Марксизм—Ленинизм никĕсĕсен кафедрин заведующийĕ Лебедев юлташ.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

СССР Наркомфинĕ кăтартса панă тăрăх, мĕнпур предприятисемпе учрежденисен 1943-мĕш çулта усă курман отпускшăн тÿлемелли укçана (компенсацие) ноябрь уйăхĕнче хушса çырса хумалла, декабрĕн 1-мĕшĕччен ăна перекет кассисене специальнăй счетсем çине куçармалла.

Предприятисемпе учрежденисен руководителĕсемпе главнăй бухгалтерĕсене компенсаци укçине перекет кассисене час куçарманшăн ответ тыттараççĕ.

Чăваш АССР-ĕнчи перекет кассисемпе госкредит управленийĕ.

Чебторгăн сĕтел-пукан тăвакан мастерскойне производствăна вĕренме учениксем-столярсем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 11, Отдел кадров Чебторга. 2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 1883 Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 [illegible] Тираж 14.400 экз.